# СĂВАПЛĂ ПАВЕЛ АПОСТОЛ КОРИНФРИ ЁНЕНЕКЕНСЕМ ПАТНЕ ЯНĂ ИККĔМĔШ ÇЫРУ

## 1-мĕш сыпăк

*Саламлани*

1 Турă ирĕкĕпе Иисус Христосăн апостолĕ пулма тивĕçнĕ Па-
велран тата Тимофей тăванăмран – Коринфри Турă чиркĕвне
тата пĕтĕм Ахаияри мĕн пур ёненекенсене. 2 Сире Атте Туррăмăр-
тан тата Иисус Христос Хуçамăртан ырăлăхпа канăçлăх пултăр.

*Павел Турра тав туни*

3 Иисус Христос Хуçамăрăн Турри тата Ашшĕ мухтавлă пултăр!
Вăл – хĕрхенӳлĕхĕн Ашшĕ, тем тĕрлĕ лăплантару Турри. 4 Вăл
пире тĕрлĕ хĕн-хурта лăплантарать. Турă панă çав лăплантарупа
эпир те хĕн-хур куракансене лăплантарма пултаратпăр. 5 Пурăнă-
çăмăрта Христос тӳснĕ пек асапсем нумайланса пынăçемĕн эпир
Христос урлă нумайрах та нумайрах лăплантару илетпĕр. 6 Хур-
лăх курасса та эпир сире лăплантарма, çăлăнăç пама куратпăр.
Лăплану илнĕрен вара эпир чăтнине эсир те тӳсĕмлĕн чăтаятăр.
7 Эпир сире çирĕп шанатпăр. Лăплану илессе те эпир сире лăп-
лантарма, çăлăнăç пама илетпĕр. Эпир çакна пĕлсе тăратпăр:
хурлăхра та, лăплануpa та эсир яланах пирĕнпе пĕрле.
8 Эй, тăвансем! Эпир Асире мĕнле хĕн-хур тӳснине сире пĕл-
термесĕр хăварас килмест. Çав чăтма çук йывăр асапа пула эпир

хамӑр чӗрӗ юласса та шанма пӑрахнӑччӗ, 9 пире вилмех пӳрнӗ
пулӗ тенӗччӗ. Анчах та мӗн пулни йӑлтах хамӑра мар, вилнисене
чӗртекен Турра шанмашкӑн пулса иртнӗ иккен. 10-11 Турӑ ун чух-
не пире, вилес патнех ҫитнӗскерсене, хӑтарчӗ; халӗ те хӑтарать.
Эсир пирӗншӗн кӗлтусах тӑрсан, Турӑ пире малашне те хӑта-
расса шанатпӑр. Вара, нумайӑшӗн кӗллине илтсе, пире хӗрхеннӗ-
шӗн нумай-нумай ҫын Турра тав тӑвӗ.

*Павел Коринфа вӑхӑтра пырайманни*

12 Эпир вара таса чунпа ҫакна калатпӑр: ҫынсемпе, уйрӑммӑ-
нах сирӗнпе, эпир пӗр чеелӗхсӗр, Турра юрӑхлӑ пек уҫӑ кӑмӑл-
лӑ пултӑмӑр; этем ӑслӑлӑхӗпе мар, Турӑ ырӑлӑхӗпе пурӑнтӑмӑр.
Ҫавӑншӑн эпир мухтанатпӑр. 13-14 Ҫырасса та эпир сирӗн пата
вуласа ӑнланма ҫук япаласем ҫинчен ҫырмастпӑр. Иисус Хрис-
тос Хуҫамӑрӑн кунӗнче эпир сирӗн урлӑ, эсир пирӗн урлӑ мух-
тава тухасса ӑнлана пуҫларӑр, ӗнтӗ тӗппипех ӑнланса илессе
шанатӑп.

15 Ҫакна ҫирӗп шанса, сире тепӗр хут чун-чӗм пархатарӗ па-
рас тесе эпӗ сирӗн патӑра маларах пырасшӑнччӗ. 16 Пӗрре эпӗ
сирӗн патӑра Македоние кайнӑ чухне ҫула май кӗресшӗнччӗ,
тепре – унтан таврӑннӑ чухне. Эсир вара мана Иудейӑна ӑсат-
са ярӑттӑр. 17 Ҫапла шухӑшласа эпӗ ҫӑмӑлттайла хӑтлантӑм-ши?
Е мӗн те пулин тума шухӑшласан ҫак тӗнче ҫыннисем пек пӗр-
ре апла, тепре капла калаҫатӑп-и? 18 Эпир сире пӗрре апла,
тепре капла темен. Турӑ епле шанчӑклӑ, пирӗн сӑмахӑмӑр та
ҫапла шанчӑклӑ. 19 Эпӗ те, Силуан та, Тимофей та – виҫҫӗмӗр
те – сирӗн патӑрта Турӑ Ывӑлӗ Иисус Христос ҫинчен ӳкӗтлесе
вӗрентрӗмӗр. Турӑ Хӑйӗн Ывӑлне ҫӗр ҫине килтерни «ҫапла» е
«ҫук» тени мар, татӑклӑн «ҫапла» тени пулать. 20 Турӑ шантар-
нисем Христосра пурте «ҫапла». Ҫавӑнпа та эпир Христос урлӑ
Турра «аминь» тесе мухтатпӑр. 21 Пире те, сире те Христоспа
пӗрлӗхлӗ туса ҫирӗплетекенӗ, суйласа илекенӗ вара – Турӑ. 22 Вӑл
пире Хӑйӗн пичечӗпе палӑртнӑ, пулассине шантарса чӗремӗрсе-
не Хӑйӗн Сывлӑшне хывнӑ.

23 Турӑ умӗнче калатӑп: сире хӗрхеннӗрен эпӗ Коринфа халӗ те
пырса ҫитейместӗп-ха. 24 Эпир сирӗн ӗненӗвӗрпе пуҫ пуласшӑн
мар – сире савӑнтармалӑх сирӗнпе пӗрле тӑрӑшасшӑн. Ӗненӳре
вара эсир хӑвӑрах ҫирӗп.

## 2-мĕш сыпăк

[1] Çапла вара, эпĕ сирĕн патăра пырса татах кулянтарса çӳрес
темерĕм. [2] Сире кулянтарсан мана савăнтараканĕ кам пулĕ? Эси-
рех, хам кулянтарнисемех, мар-и вара? [3] Сирĕн патăра пырсас-
сăн эсир мана савăнтарасса кĕтетĕп. Çавăнпа та, кулянмалла
пулса ан тухтăрччĕ тесе, çакна пыричченех çыртăм та ĕнтĕ, мĕн-
шĕн тесен манăн савăнăçăм сирĕншĕн пуриншĕн те савăнăç. Эпĕ
сирĕн пирки иккĕленместĕп. [4] Çырасса та эпĕ сирĕн патăра питĕ
хуйхăллă, суранлă чĕрепе, вĕри куççуль юхтарса çыртăм. Сире
кулянтарас тесе мар, хам сире мĕн тери юратнине пĕлччĕр терĕм.

*Кӳрентерекенсене каçарасси*

[5] Мана кӳрентерекен те пулчĕ-ха, анчах вăл мана кăна мар, си-
ре пурсăра та пăртак кӳрентерчĕ. Ӳстерсе калас мар тенĕрен пăр-
так тетĕп-ха. [6] Çавнашкал çыншăн нумайăшĕ питлени хăех айăп-
лани пулĕ. [7] Ĕнтĕ вăл ытлашши хуйха ан ӳктĕр тесен, эсир ăна
каçарни, лăплантарни вырăнлăрах. [8] Çавăнпа та тархасласах ый-
татăп: хăвăр ăна малтанхиллех юратнине кăтартса парăр. [9] Мал-
танхи çырăвне те эпĕ сире тĕрĕслесе пăхас тесе, сăмахăмран ирт-
местĕр-ши тесе çырнăччĕ. [10] Эсир кама каçаратăр, эпĕ те ăна
каçарăп. Эпĕ те, кама та пулин каçарсан, ăна Христос умĕнче
сирĕншĕн каçаратăп. [11] Çапла туни пире шуйттан çиеле тухасран
хăтарать; унăн киревсĕр шухăшĕсем пирĕншĕн паллă.

*Павел канăçсăрлăхĕ тата лăпланăвĕ*

[12] Эпĕ Троадăна Христос çинчен Ырă Хыпар пĕлтерме пыр-
сассăн, Хуçамăр мана лайăх майсем уçса пачĕ. [13] Çапах та ма-
нăн ăшăм вăркарĕ, мĕншĕн тесен эпĕ унта Тит тăванăмăра ту-
паймарăм. Вара унтисемпе сывпуллашрăм та Македоние тухса
кайрăм.

[14] Тавах Турра! Турă пире Христос урлă яланах çĕнтерӳллĕ тă-
вать. Пирĕн урлă вара Хăй çинчен пур çĕрте те техĕмлĕ те чаплă
пĕлӳ сарать. [15] Эпир Турăшăн — Христосăн техĕмлĕхĕ. Çав ырă
шăршă çăлăнакансем хушшинче те, пĕтекенсем хушшинче те
сарălать. [16] Пĕрисемшĕн эпир вилĕм кӳрекен пĕтмелли шăр-
шă, теприсемшĕн — чĕрĕлĕх паракан пурăнăç шăрши. Çак тивĕçе

кам хӑй ҫине илме пултарӗ? [17] Нумайӑшӗ Турӑ сӑмахне пӑсса вӗ-
рентеҫҫӗ, эпир апла вӗрентместпӗр. Христоспа пӗрлӗхлӗ пулса,
Турӑ сӑмахне Унӑн ҫыннисем пек таса чунпа пӗлтерсе, Турӑ
умӗнче вӗрентетпӗр.

**3-мӗш сыпӑк**

*Ҫӗнӗ Халалшӑн тӑрӑшакансем*

[1] Сире хамӑрпа ҫӗнӗрен паллаштармалла-и? Хӑшӗ-пӗрисем си-
рӗн патӑра пынӑ чухне е сирӗн патӑртан кайнӑ чухне ятарласа
хӑйсене ырланӑ ҫыру ҫыртараҫҫӗ. Пире вӑл кирлӗ-и? Паллах,
кирлӗ мар. [2] Пирӗн ҫыру – эсир. Ӑна чӗремӗрсенче ҫырнӑ, ӑна
пурте пӗлеҫҫӗ, пурте вулаҫҫӗ. [3] Эсир Христосӑн ҫырӑвӗ иккенне
хӑвӑрах кӑтартса паратӑр. Эпир тӑрӑшнипе ӑна чернилпа мар,
чӗрӗ Туррӑн Сывлӑшӗпе ҫырнӑ. Ӑна чул хӑма ҫине мар, этем чӗ-
рисем ҫине ҫырнӑ. [4] Пирӗн ҫак ҫирӗп шанчӑк Христос урлӑ Ту-
рӑран килет. [5] Мӗн те пулин хамӑртан килет текен шухӑш пирӗн
пуҫа та пырса кӗмест, мӗншӗн тесен пирӗн пултарулӑх – Турӑ-
ран. [6] Турӑ пире Ҫӗнӗ Халалшӑн тӑрӑшма пултарулӑх панӑ. Ҫав
Халалра вара чи кирли – ҫырнӑ сас палли мар, Сывлӑш. Мӗн-
шӗн тесен саккунри чӗрӗ мар сас палли вилӗм кӳрет, Сывлӑш
вара чӗрӗлӗхлӗ тӑвать.

[7] Чул хӑмасем ҫине ҫырнӑ чӗрӗлӗх парайман сас паллишӗн
ӗҫлесе тӑни те мухтавлӑ пулнӑ. Ҫав сӳнес мухтав ҫути ҫиҫсе тӑ-
нӑран Израиль ҫыннисем Моисей сӑн-пичӗ ҫине те пӑхма пул-
тарайман. [8] Саккуншӑн ӗҫлесе тӑни те ҫав тери мухтавлӑ пулсас-
сӑн, Сывлӑш хавхалантарнипе тӑрӑшасси татах та мухтавлӑрах
мар-и? [9] Айӑплакан саккуншӑн ӗҫлесе тӑни чаплӑ пулсассӑн,
тӳрре кӑларакан халашӑн тӑрӑшасси мӗн тери чаплӑрах! [10] Ку
тӗлӗшӗнчен вара кайранхи мухтав ҫути хупласа хунӑран малтан-
хи халӗ мухтав пек те туйӑнмасть. [11] Мӗншӗн тесен сӳнес ҫутӑ
мухтавлӑ пулсан, сӳнмен ҫутӑ мӗн тери мухтавлӑрах.

[12] Ҫавнашкал шанчӑк пуртан эпир уҫҫӑн та хӑюллӑн калаҫат-
пӑр. [13] Эпир Моисей пек мар. Израиль ҫыннисем мухтав ҫути
сӳннине ан асӑрхаччӑр тесе, вӑл сӑн-питне пӗркенчӗкпе хупласа
ҫӳренӗ. [14] Анчах та Израиль ҫыннисен ӑсӗ хытса ларнӑ. Авалхи
Халала вуланӑ чухне вӗсем ҫав пӗркенчӗке уҫаймаҫҫӗ, мӗншӗн
тесен вӑл Христос урлӑ кӑна уҫӑлать. [15] Моисей саккунне вуланӑ

чухне паян кунччен вĕсен чун-чĕрине пĕркенчĕк витсе тăрать;
16 анчах та Хуçамăр енне çаврăнсан çав пĕркенчĕк илĕнет. 17 Ху-
çамăр вăл – Сывлăш; Хуçамăрăн Сывлăшĕ ăçта, ирĕклĕх те ça-
вăнта. 18 Пирĕн çине, уçă сăн-питлĕскерсем çине, Хуçа Турă мух-
тавĕн çути тĕкĕр çине ӳкнĕ пек ӳкет. Хуçа Туррăмăрăн Сывлăшĕ
пулăшнипе эпир Ун евĕрлĕ пулса, чаплăланса пыратпăр.

## 4-мĕш сыпăк

*Тăм савăтри мул*

1 Турă пире Хăйĕн ырăлăхĕпе çакнашкал ĕç шанса панă, çавăн-
па эпир хуйха ӳкместпĕр. 2 Унтан та ытларах, вăрттăн та намăс
ĕçсенчен пăрăнса, эпир чееленместпĕр, Турă сăмахне пăсмаст-
пăр. Чăнлăха уççăн пĕлтерсе Турă умĕнче эпир çынсене хамăрпа
хамăрах паллаштаратпăр. 3 Эпир пĕлтерекен Ырă Хыпар хуп-
ланчăк пулсассăн, вăл пĕтмелли çул çинче тăракансемшĕн кăна
çапла. 4 Вĕсен, ĕненменнисен, ăсне çак тĕнче турри суккăрлат-
нă. Вĕсем Христос мухтавĕ çинчен калакан Ырă Хыпар çутине
курмаççĕ. Христос вара – курăнман Туррăн курăннă сăнарĕ.
5 Эпир хамăр çинчен вĕрентместпĕр, Иисус Христос вăл пирĕн
Хуçамăр пулни çинчен вĕрентетпĕр. Эпир Иисус ячĕшĕн сирĕн
чура пултăмăр. 6 Çутта тĕттĕмлĕхрен пулма хушнă Турă пире Хă-
йĕн мухтавне пĕлтерсе çутта кăлармашкăн чĕремĕрсене çутатрĕ.
Мухтав çути вара Иисус Христос сăн-питĕнчен килет.

7 Эпир çав мул упранакан тăм савăтсем çеç. Çапла ĕнтĕ, ви-
çесĕр вăй-хăват пирĕнтен мар, Турăран килни уççăнах палă-
рать. 8 Çавăнпа та пире темĕн чухлĕ таптасан та аркатаймаççĕ.
Тӳсме çук йывăрлăхра та эпир шанчăка çухатмастпăр. 9 Пире
хĕсĕрлеççĕ, анчах Турă пăрахмасть. Пире ураран ӳкереççĕ, ан-
чах пĕтерейменççĕ. 10 Хамăр ӳт-пӳре Иисусăн чĕрĕлĕхĕ палăртăр
тесе, эпир яланах Иисус Хуçамăрăн вилĕмлĕхĕпе çӳретпĕр.
11 Эпир, вилĕмлĕ ӳт-пӳре Иисусăн чĕрĕлĕхĕ палăртăр тесе, пу-
 răннă чухне Иисус ячĕшĕн тăтăшах вилĕмпе куçа-куçăн тăрат-
пăр. 12 Çапла вара, пирĕн валли – вилесле асапсем, сирĕн вал-
ли – чĕрĕ пурăнăç. 13 «Эпĕ ĕненетĕп, çавăнпа калатăп», – тенĕ
Çырнинче. Эпир те çавнашкалах çирĕп ĕненетпĕр, ĕненнĕрен
калатпăр та. 14 Мĕншĕн тесен çакна пĕлетпĕр: Иисус Хуçамă-
ра чĕртсе тăратнă Турă пире те, Иисуса чĕртнĕ пекех чĕртсе,

сирĕнпе пĕрле Хăй умне тăратĕ. [15] Ĕнтĕ нумайăшĕ Туррăн тул-
ли ырăлăхне илсе Турра ытларах та ытларах тав туса мухтаччăр
тесе, эпир пурне те сирĕншĕн тӳсетпĕр.

*Ĕненӳпе пурăнасси*

[16] Çавăнпа та эпир хуйха ӳкместпĕр. Ӳт-пӳ ватăлать пулин те,
чун-чĕм кунран-кун çĕнелсех пырать. [17] Вăхăтлăх кăшт асаплан-
нăшăн эпир виçесĕр пысăк, ĕмĕрлĕх мухтав илетпĕр. [18] Эпир ку-
рăнаканни патне мар, курăнманни патне ăнтăлатпăр; мĕншĕн
тесен курăнаканни вăхăтлăха, курăнманни ĕмĕрлĕхе.

## 5-мĕш сыпăк

[1] Эпир пĕлетпĕр: çĕр çинчи пирĕн пӳрт, çак хӳшĕ, аркансас-
сăн, тӳпере пирĕн алăпа туман, Турă хатĕрленĕ ĕмĕрлĕх кил-çурт
пур. [2] Çавăнпа та çĕр çинчи хӳшĕре пурăннă чухне эпир тӳпери
кил-çуртăмăра кĕресшĕн, тӳпе тумтирне тăхăнасшăн тертленсе
ахлататпăр. [3] Анчах та тумланнă çинчех пирĕн çарамас юлас мар-
ччĕ. [4] Эпир çав ӳт-пӳлĕх хӳшши пусса тăнипе тертленсе ахлатат-
пăр. Эпир ӳт-пӳлĕхе хывса пăрахасчĕ теместпĕр, ун çийĕнчен тӳпе
тумтирне тăхăнасчĕ, ĕмĕрлĕх пурăнăç вилĕмлине хуплатăрччĕ
тетпĕр. [5] Турă пире шăпах та çавăншăн хатĕрленĕ, сăмахне тытма
шантарса Хăйĕн Сывлăшне панă.

[6] Ĕнтĕ эпир яланах хастар кăмăллă. Ӳт-пӳлĕх хӳшшинче пурăн-
нă чухне Хуçамăртан аякра пулнине пĕлетпĕр — [7] эпир хамăр куç
мĕне курнипе мар, чунăмăр мĕне ĕненнипе пурăнатпăр — [8] ça-
вăнпа та эпир, хастар кăмăллă пулса, ӳт-пӳрен тухса Хуçамăр
патне куçни аванрахчĕ тесе ĕмĕтленсе пурăнатпăр. [9] Çавăнпа
эпир ӳт-пӳлĕх хӳшшинче пурăннă чухне те, унтан тухсан та Ăна
юрăхлă пулаясчĕ тесе тимлĕн тăрăшатпăр. [10] Мĕншĕн тесен пи-
рĕн пурин те Христос сучĕ умне тăмалла, ӳт-пӳлĕх хӳшшинче
пурăннă чухне мĕн тунине кура — ырă е усал тунине кура — ти-
вĕçлине илмелле.

*Çынсене Турăпа çураçтарас ĕç*

[11] Çапла вара, Хуçа Турă сумлăхĕнчен хăрамаллине пĕлсе, эпир
çынсене ӳкĕтлетпĕр. Турă пире пĕлсе тăрать, эсир те пире пĕлетĕр
пуль тесе шанатăп. [12] Çакна эпир хамăра каллех ырлаттарасшăн

каламастпӑр. Хӑшӗ-пӗрисем чунрипе мухтанас вырӑнне тула-
шӗнчипе мухтанаҫҫӗ. Ун пеккисене тавӑрса каламашкӑн эпир
сире хамӑрпа мухтанма сӑлтав паратпӑр. 13 Эпир ӑсран тухнӑ пек
тӑрӑшни – Турӑшӑн, ӑслӑ-тӑнлӑ тӑрӑшни – сирӗншӗн. 14 Мӗн-
шӗн тесен пире Христос юратулӑхӗ ертсе пырать. Эпир ҫапла
шухӑшлатпӑр: пӗри пуриншӗн те вилнӗ пулсассӑн, эппин пурте
вилнӗ. 15 Чӗррисем хӑйсемшӗн мар, хӑйсемшӗн вилсе чӗрӗлни-
шӗн пурӑнччӑр тесе, Христос пуриншӗн те вилнӗ.

16 Ҫавӑнпа эпир текех никама та этемле шухӑшласа хакламаст-
пӑр. Маларах эпир Христос пирки ҫавнашкал этемле шухӑшланӑ
пулсан, халӗ ӗнтӗ ун пек шухӑшламастпӑр. 17 Ҫапла вара, кам
Христоспа пӗрлӗхлӗ, Турӑ ҫавна ҫӗнӗрен пултарнӑ. Авалхи иртсе
кайнӑ, халӗ йӑлтах ҫӗнни. 18 Ҫакӑ пӗтӗмпех Турӑран, Вӑл пире
Христос урлӑ Хӑйӗнпе ҫураҫтарнӑ, ҫынсене Хӑйӗнпе ҫураҫтарас
ӗҫе пире шанса панӑ. 19 Мӗншӗн тесен Турӑ, ҫынсен ҫылӑхӗсене
шута хумасӑрах, Христос урлӑ Хӑйпе тӗнчене ҫураҫтарнӑ, ҫураҫ-
тару сӑмахне вӗрентме пире шанса панӑ. 20 Ҫапла ӗнтӗ эпир
Христос ячӗпе вӗрентме янӑскерсем пулатпӑр. Эпир ӳкӗтлемест-
пӗр, пирӗн урлӑ Турӑ Хӑй ӳкӗтлет, ӗнтӗ Христос ячӗпе тархас-
латпӑр: Турӑпа ҫураҫӑр. 21 Христоспа пӗрлӗхлӗ пулса Турӑ умӗнче
тӳрре тухчӑр тесе, пирӗн ҫылӑхсемшӗн Вӑл ҫылӑха кӗрсе курман-
скере парнелӗхе кӳнӗ.

## 6-мӗш сыпӑк

1 Эпир вара, Турӑ ӗҫне тӑвакансем пулса, сире ҫапла йӑлӑнат-
пӑр: Турӑ ырӑлӑхне илни сирӗншӗн усӑсӑр ан пултӑр. 2 «Майлӑ
вӑхӑтра Эпӗ сана илтрӗм, ҫӑлӑнӑҫ кунӗнче сана пулӑшрӑм», –
тесе каланӑ-ҫке Турӑ. Акӑ ӗнтӗ ҫав майлӑ вӑхӑт ҫитрӗ, акӑ ӗнтӗ
ҫав ҫӑлӑнӑҫ кунӗ килчӗ. 3 Хамӑр ӗҫе ан хурлаччӑр тесе эпир ни-
кама та, нимӗнле те такӑнтармастпӑр. 4 Пур тӗлӗшӗнчен те хамӑ-
ра Турӑ ӗҫне тӑвакансем пек тыткалатпӑр, пурне те пысӑк чӑтӑм-
лӑхпа тӳсетпӗр: хура-шурне те, хӗсӗрленине те, 5 хӗненине те,
тӗрмене хупнине те, хӳтернине те, йывӑр ӗҫе те, ҫӗр ҫывӑрман-
нине те, хырӑм выҫҫине те. 6 Хамӑр ӗҫе эпир таса, ӑслӑ-тӑнлӑ,
пысӑк чунлӑ, ырӑ, Святой Сывлӑш тивлечӗллӗ, чӑн-чӑн юратул-
лӑ, 7 чӑнлӑх сӑмахӗллӗ, Турӑ вӑй-хӑвачӗллӗ пулнипе ҫирӗплетет-
пӗр. Икӗ аллӑмӑрта та – тӳрӗлӗх хӗҫӗ. 8 Чыслӑхпала чыссӑрлӑх,

ырӑ ятпа усал ят пирӗн хыççӑнах çӳреççӗ. Пирӗнте суялӑх çук
пулин те, пире суеçӗ теççӗ. 9 Эпир паллӑ çынсем мар, анчах пире
пурте пӗлеççӗ. Пирӗн çинчен вилнӗ сӑмах та кӑлараççӗ, акӑ, хӑ-
вӑрах куратӑр, эпир чӗрӗ. Пире вӗлермеллех айӑплаççӗ, анчах та
эпир вилместпӗр. 10 Пире кӳрентереççӗ, анчах та эпир яланах
савӑнаçлӑ. Пире чухӑн теççӗ, анчах та эпир нумайӑшне пӗтми
мул паратпӑр. Пирӗн, çук çынсен, пурте пур.

11 Эй, Коринф çыннисем! Сирӗншӗн пирӗн чӗлхе-çӑвар уçӑ,
чун-чӗремӗр аслӑ. 12 Эсир пирӗн чун-чӗремӗрте, анчах сирӗн
чун-чӗрӗрте пирӗншӗн вырӑн сахал. 13 Ачамсене каланӑ пек ка-
латӑп: хире-хирӗçле пултӑр тесен эсир те чун-чӗрӗре уçӑр.

*Чӗрӗ Туррӑн çурчӗ*

14 Ӗненменнисемпе пӗрле пӗр лава ан кӳлӗнӗр, вӗсем сире юл-
таш мар. Тӳрӗлӗхӗн йӗркесӗрлӗхпе мӗн хутшӑнмалли пур? Çутӑ-
пала тӗттӗмӗн мӗн пӗрлӗхӗ пур? 15 Христоспала Велиар* епле ки-
лӗштерччӗр? Е ӗненекенпе ӗненмен çын хушшинче мӗн пӗрлӗхӗ
пур? 16 Туррӑн çурчӗпеле пуççапмалли кӗлеткесем епле пӗрле
пулччӑр? Эсир вара – чӗрӗ Туррӑн çурчӗ. Турӑ çапла каланӑ:
«Эпӗ вӗсен ӑшӗнче, вӗсен хушшинче пурӑнӑп; вара вӗсен Турри
пулӑп, вӗсем Манӑн халӑхӑм пулӗç». 17 «Çавӑнпа та вӗсем хуш-
шинчен тухса кайӑр, уйӑрӑлӑр, – тет Хуçа Турӑ. – Таса маррине
ан сӗртӗнӗр, вара Эпӗ сире хапӑл туса йышӑнӑп». 18 «Эпӗ вара
сирӗн Аçӑр пулӑп, эсир Манӑн ывӑлӑмсем, хӗрӗмсем пулӑр, тет
Пурне те тытса тӑракан Хуçамӑр».

## 7-мӗш сыпӑк

1 Эй, савнӑ тӑванӑмсем! Акӑ мӗнле сӑмах парса шантарнӑ
пире. Эппин хамӑра хамӑр ӳт-пӳпе чунӑн тӗрлӗ ирсӗрлӗхӗнчен
тасатар, Турӑран хӑраса сӑваплӑх патне ӑнтӑлар.

*Павел ӗненекен ушкӑн ӳкӗннишӗн савӑнни*

2 Чунӑрсене уçса пире йышӑнсамӑрччӗ! Эпир никама та кӳрен-
термен, сиен туман, никам шучӗпе те пуйман. 3 Эпӗ сире ӳпкеле-
местӗп. Маларах çапла каланӑччӗ ӗнтӗ: эсир пирӗн чун-чӗремӗрте,

---

* 6:15 *Велиар* – шуйттанӑн, усал сывлӑшсен пуçлӑхӗн, ячӗ.

вилсен те, пурăнсан та пĕрлех пуласчĕ. 4 Эпĕ сире хытă шанатăп,
сирĕнпе нумай мухтанатăп. Инкек-синкекре сире аса илетĕп те
чунăм хастарлăхпа, виçесĕр савăкпа тулать.

5 Македоние çитсессĕн эпир нимле канлĕх те тупаймарăмăр.
Пире пур енчен те инкек-синкек кĕтсех тăчĕ: йĕри-тавра — хирĕçӳлĕх, ăшра — шиклĕх.
6 Анчах та йăвашшисене хастарлăх паракан Турă пирĕн патăмăра Тита ярса пире те çирĕплĕх пачĕ.
7 Эпир Тит килнишĕн кăна мар, вăл сирĕн патăртан хавхаланса
килнишĕн савăнтăмăр. Тит пире эсир тăрăшни, кулянни, маншăн тем тума та хатĕр пулни çинчен каласа кăтартрĕ. Вара эпĕ
тата ытларах савăнса кайрăм. 8 Хамăн çырăвăмпа сире кулянтартăм пулин те, ӳкĕнместĕп — маларах ӳкĕне те пуçланăччĕ, —
мĕншĕн тесен çав çыру, вăхăтлăха пулин те, сире кулянтарнине пĕлетĕп.
9 Савăнасса вара халĕ эпĕ сире кулянмалла пулса
тухнишĕн мар, эсир кулянниле ӳкĕннишĕн савăнатăп. Эсир
кулянни Турра юрăхлă, эппин хамăр çырупа эпир сире сиен
тумарăмăр. 10 Мĕншĕн тесен Турăшăн хуйхăрни каялла таврăнми ӳкĕнтерсе çăлăнăç кӳрет, ку тĕнчеришĕн хуйхăрни вара вилĕм кӳрет.
11 Пăхăр-ха, Турăшăн хуйхăрни сире епле тимлекен,
каçару ыйтакан турĕ. Тата эсир çылăха кĕнĕ çынна еплерех
тарăхатăр, еплерех хăраса пăшăрханатăр, пирĕнпе тĕл пулма
ĕмĕтленетĕр. Çылăхлине айăплас кăмăлăр тата еплерех пысăк!
Эсир çав ĕçре хăвăр таса пулнине пур тĕлĕшĕнчен те кăтартса
патăр. 12 Çапла вара, эпĕ сирĕн пата янă çырăва хур тăваканшăн
та, хур куракан шăн та çырман, эпир Турă умĕнче сирĕншĕн
мĕнле тăрăшни паллă пултăр тесе çырнă. 13 Эсир хавхалантарнишĕн эпир питĕ савăнтăмăр, анчах та сирĕн патăртан чунне
лăплантарса таврăннă Тит савăнăçне курсан, эпир тата ытларах хĕпĕртерĕмĕр.

14 Çапла ĕнтĕ сирĕн пирки Тит умĕнче мухта-мухта калаçнăшăн мана намăс пулмарĕ. Эпир сире яланах чăннине каланă пекех, Тит умĕнче сире мухтани те чăна тухрĕ.
15 Халĕ вара
Тит эсир мĕнле итленине, мĕнле хисеплесе-хăраса хапăл тунине аса илет те кăмăлĕпе тата ытларах сирĕн патăра туртăнать.
16 Ĕнтĕ эсир пур тĕлĕшĕнчен те шанчăклă пулнишĕн савăнатăп.

## 8-мӗш сыпӑк

*Кӑмӑллӑ пулӑшу*

1 Эй, тӑвансем! Халӗ эпир сире Македонири ӗненекен уш-
кӑнсене Турӑ панӑ ырӑлӑх ҫинчен пӗлтересшӗн. 2 Нумай ин-
кек-синкек тӳсеҫҫӗ пулин те, вӗсем савӑнмаллипех савӑнаҫҫӗ.
Аран-аран, ҫити-ҫитми пурӑнаҫҫӗ пулин те, вӗсен тараватлӑхӗ
ытлашшипех. 3 Вӗсем вӑйӗсем ҫитнӗ таран ҫеҫ мар, пултарнин-
чен те ытларах пулӑшма тӑрӑшаҫҫӗ. Ҫакна куҫӑн курнӑран кала-
тӑп. 4 Вӗсем пире ӗненекенсене пулӑшас чыслӑ ӗҫе хутшӑнмаш-
кӑн ирӗк пама тархасларӗҫ. 5 Вӗсем эпир шаннӑ чухлӗ кӑна мар,
унтан та ытларах турӗҫ, пӗтӗм чунне чӑн малтанах Хуҫа Турра,
унтан Турӑ ирӗкӗпе пире пачӗҫ. 6 Ҫавӑнпа та эпир Тита ҫав ырӑ
пулӑшу ӗҫне сирӗн патӑрта епле аван пуҫланӑ, ҫаплах туса пӗ-
терме хушрӑмӑр. 7 Ӗненни, ӑста калаҫни, пӗлни, пур енчен те
тӑрӑшуллӑ пулни, пире юратни – ҫаксем пурте сирӗн туллиех.
Эппин ҫак ырӑ ӗҫре те ҫавнашкалах вашават пулӑр.

8 Ҫакна эпӗ сире хушса каламастӑп. Ыттисен тӑрӑшулӑхӗ
ҫинчен каласа эпӗ сирӗн юратулӑхӑр чӑн е чӑн мар пулнине
тӗрӗслесшӗн. 9 Мӗншӗн тесен эсир Иисус Христос Хуҫамӑрӑн
ырӑ кӑмӑлне пӗлетӗр. Вӑл, чап тӗлӗшӗнчен пуянскер, Хӑйне
мӗскӗнлетсе сире мухтавпа пуйтарас тесе, сирӗншӗн мӗскӗне
тухнӑ. 10 Сире хамӑн шухӑшӑма пӗлтеретӗп: ҫак ырӑ ӗҫе вӗҫле-
ни сирӗншӗн хӑвӑршӑнах усӑллӑ пулӗ. Эсир тин ҫеҫ пулӑшма
пуҫланӑ ҫынсем мар-ҫке-ха, пӗлтӗртенпех ҫав шухӑш-ӗмӗтпе
пурӑнатӑр. 11 Ӗнтӗ хӑвӑр хытӑ ӗмӗтленнине пултарнӑ таран пур-
нӑҫласа, халӗ ҫав ӗҫе туса пӗтерӗр. 12 Пулӑшма тӑрӑшни пулсас-
сӑн, Турӑ ӑна камӑн мӗн ҫуккине кура мар, камӑн мӗн пуррине
кура йышӑнӗ. 13 Ку вӑл сирӗн пурӑнӑҫӑра йывӑрлатса ыттисе-
не ҫӑмӑллӑх парассине пӗлтермест, сӑмах кунта хире-хирӗҫле
пӗр танлӑх пирки пырать. 14 Паян эсир, ытлашшине парса, вӗ-
сен ҫитменнине ҫитеретӗр, сирӗн ҫитмен чухне вӗсем ытлаш-
шине парӗҫ, вара пӗр танлӑх пулӗ. 15 Ҫырнинче ун пирки ҫап-
ла каланӑ: «Нумай пухнин ытлашши пулман, сахал пухнин
ҫитменни пулман».

*Титпа юлташӗсем*

16 Тита сирӗншӗн ҫав тери тӑрӑшмалла чун-чӗреллӗ тунӑшӑн
Турра тавах. 17 Чӑн та ӗнтӗ, эпӗ ӑна каланӑччӗ, анчах вӑл, питӗ тӑ-
рӑшуллӑскер, сирӗн патӑра пыма хӑй кӑмӑл турӗ. 18 Унпа пӗрле
эпир тата тепӗр тӑвана яратпӑр. Ырӑ Хыпар вӗрентме ӑста пулнӑ-
ран ӑна пур ӗненекен ушкӑнсем те мухтаҫҫӗ. 19 Тата ӗненекен уш-
кӑнсем те ӑна ҫак ыркӑмӑллӑх ӗҫӗнче пирӗн юлташ пулма суйла-
рӗҫ. Ыркӑмӑллӑх ӗҫне эпир Хуҫа Турӑ мухтавӗшӗн тата эсир тӑ-
рӑшнине кура тӑватпӑр. 20 Хамӑра нумай укҫа-тенкӗ шанса панине
пӗлсе, сӑмах илтесрен унпа тирпейлӗ усӑ курма тӑрӑшатпӑр,
21 мӗншӗн тесен ырришӗн пирӗн Хуҫа Турӑ умӗнче кӑна мар, ҫын-
сем умӗнче те тӑрӑшмалла. 22 Тата вӗсемпе пӗрле эпир хамӑрӑн те-
пӗр тӑвана та ятӑмӑр, унӑн тӑрӑшулӑхне тӗрлӗ лару-тӑрура пӗрре
мар тӗрӗслене. Вӑл сире халӗ питӗ шанать, ҫавӑнпа тата ытларах
тӑрӑшать. 23 Тит пирки ҫакна каламалла: вӑл манӑн пулӑшаканӑм
тата сирӗн патӑрти ӗҫри юлташӑм. Ытти тӑванӑмӑрсем те Христо-
са мухтава кӑлараҫҫӗ, вӗсем – ӗненекен ушкӑнсем суйласа янӑс-
керсем. 24 Ҫапла вара, вӗсене хӑвӑр юратнине тата эпир сирӗнпе
тӗрӗсех мухтаннине ӗненекен ушкӑнсем умӗнче кӑтартса парӑр.

## 9-мӗш сыпӑк

*Ӗненекенсене пулӑшасси*

1 Тепӗр тесен, эпӗ сирӗн патӑра ӗненекенсене пулӑшасси ҫин-
чен ҫырни кирлех те мар, 2 мӗншӗн тесен эсир тӑрӑшнине пӗле-
тӗп. Ахаия ҫыннисем пулӑшу пама пӗлтӗртенпех хатӗр тесе эпӗ
ӗнтӗ Македонири ӗненекенсем умӗнче мухтанса та илтӗм. Эсир
хыпса ҫунни нумайӑшне хавхалантарчӗ. 3 Анчах та эпӗ сире ку
тӗлӗшӗнчен мухтани пустуй ан пултӑрччӗ тесе, каланӑ пекех, си-
ре хатӗрлесе ҫитермешкӗн сирӗн патӑра тӑвансене ятӑм. 4 Ахаль-
лӗн, пирӗнпе пӗрле Македонири ӗненекенсенчен кам та пулин
сирӗн патӑра пырсан, сирӗн пулӑшӑвӑр хатӗр маррине курсан,
сире мухтаса ҫапла шаннӑшӑн пире намӑс пулӗ. Хӑвӑр намӑс ку-
расси пирки шарламастӑп та. 5 Ҫавӑнпа та тӑвансене сирӗн патӑ-
ра маларах ҫитсе хӑвӑр пухма шантарнӑ пулӑшӑва хатӗрлесе ҫи-
терме ӳкӗте кӗртес терӗм. Эсир пулӑшни хистесех илни пек мар,
ырӑ сунса пани пек пултӑрччӗ терӗм.

[6] Ҫакна ан манӑр: вӑрлӑхне сахал акакан сахал вырса илӗ, ну-
май акакан вара нумай вырса илӗ. [7] Кашниех хӗрхенмесӗр, хӑйӗн
ирӗкӗпе, чунтан-кӑмӑлтан патӑр, мӗншӗн тесен Турӑ савӑнса па-
ракана юрататъ. [8] Турӑ хӑватлӑ: сирӗн яланах пур тӗлӗшӗнчен те
ҫителӗклӗ пурӑнса, тӗрлӗрен ырӑ ӗҫсем тума май пултӑр тесе,
Вӑл сире тӗрлӗ ырӑлӑхне туллиех парӗ. [9] Ҫырнинче ҫапла каланӑ:
«вӑл салатса пӗтернӗ, кӗлмӗҫсене валеҫсе панӑ; унӑн тӗрӗслӗхӗ
ӗмӗртен ӗмӗре пыратъ». [10] Акаҫӑна акмашкӑн вӑрлӑх, ҫимешкӗн
ҫӑкӑр Параканӗ сире акмашкӑн нумай вӑрлӑх парӗ, сирӗн ырӑ
кӑмӑллӑхӑртан тулӑх тыр-пул ӳстерӗ. [11] Яланах хӗрхенмесӗр пу-
лӑшмашкӑн Турӑ сире пур тӗлӗшӗнчен те пуйтарӗ. Пирӗн урлӑ
пулса иртекен ырӑ кӑмӑллӑхшӑн ҫынсем Турра тав тӑвӗҫ. [12] Мӗн-
шӗн тесен ҫак ӗҫ – ӗненекенсене пулӑшасси – вӗсен ҫитменни-
не ҫитерет кӑна мар, чылайӑшӗн чунӗнче Турра туллин тав тӑвас
ӗмӗт ҫуратать. [13] Вӗсем, сирӗн ӗҫӗн уссине курсан, эсир Христо-
сӑн хӑвӑр йышӑннӑ Ырӑ Хыпарӗ хушнине тунӑшӑн, пурри-ҫук-
кине хӑйсемпе те, ытти ӗненекенсемпе те чунтан пайланӑшӑн
Турра мухтӗҫ. [14] Турӑ ырӑлӑхӗ сирӗнте туллиех пулнишӗн сире
кӑмӑлласа, вӗсем сирӗншӗн кӗлтӑвӗҫ. [15] Эппин, калама ҫук пы-
сӑк ырӑлӑх панишӗн Турра тав!

## 10-мӗш сыпӑк

*Павел хӑйӗн апостол ӗҫне хӳтӗлени*

[1] Эпӗ, Павел, сирӗнпе куҫа-куҫӑн чухне йӑвашскер, сирӗнтен
аякра чухне хаярскер, сире Христос йӑвашлӑхӗпе тата хӗрхенӳ-
лӗхӗпе ӳкӗтлетӗп. [2] Сирӗн патӑра пырсассӑн мана хаяр та ҫирӗп
пулма сӑлтав ан парӑрах. Хӑш-пӗрисен шухӑшӗпе, эпир хамӑра
ҫак тӗнче ҫыннисем пекех тыткалатпӑр имӗш; вӗсене вара ҫи-
рӗплӗхӗме кӑтартас шухӑш пур манӑн. [3] Мӗншӗн тесен эпир
ҫак тӗнчерех пурӑнатпӑр пулин те, Ырӑ Хыпаршӑн ҫак тӗнчери-
сен мелӗсемпе ҫапӑҫмастпӑр. [4] Пирӗн ҫар хатӗрӗ ку тӗнчери мар,
Турӑ хӑвачӗпе вӑл крепоҫсене те аркатаять. Унпа эпир хамӑра
хирӗҫле ӑслӑ пек шухӑшсене те, [5] Турра пӗлессине хирӗҫлекен
кирек епле мӑнкӑмӑллӑха та аркататпӑр; кирек епле шухӑш-ӗмӗ-
те те Христос ирӗкне пӑхӑнтармашкӑн тыткӑна илетпӗр. [6] Эсир
Христоса пӗтӗм чун-чӗререн пӑхӑнсан вара эпир кирек епле ит-
леменлӗхшӗн те явап тыттарма хатӗр.

[7] Çынна тулашӗнчен пăхса кăна хаклатăр-и? Кам хăйне хăй
Христоспа пӗрлӗхлӗ тет, çав, хăйӗнпе танлаштарса, пирӗн çин-
чен те хăйӗн пекех Христоспа пӗрлӗхлӗ тесе шутлатăр. [8] Эпӗ ха-
мăра Хуçамăр панă ирӗкпе тата ытларах мухтанас пулсан та, на-
мăса юлмăп; пире çав ирӗке чунăрсене аркатма мар, çирӗплетме
панă. [9] Эпӗ сире çырусемпе кăна хăратнăн ан туйăнтăр тата.
[10] «Çырăвӗсенче вăл хаяр та паттăр, анчах та куçа-куçăн калаçнă
чухне халсăр, сăмахӗ те унăн ниме тăмасть», — теççӗ хăшӗ-пӗри-
сем. [11] Унашкаллисем çакна пӗлсе тăччăр: аякран эпир мӗн кала-
са çыратпăр, куçкӗрет ӗçӗмӗрте те çавнашкалах.

[12] Хамăра эпир хăйсене мăнна хуракансемпе танлаштарма е
пӗр картлашка çине лартма хăяймастпăр. Вӗсем хăйсене хăйсем
хакласа, хăйсен виçипе виçсе, ăссăрла хăтланаççӗ. [13] Эпир виçе-
сӗр мухтанмастпăр. Мухтанмалли ӗçӗмӗрӗн анине пире Турă чи-
кӗлесе панă. Эсир те çав ана çинчех. [14] Енчен те эпир сирӗн па-
тăра Христосăн Ырă Хыпарне çитермен пулсан, пире чиккине
пӗлмесӗр мухтанатăр теме пулатчӗ, анчах та эпир Ырă Хыпар
пӗлтерсе сирӗн пата та çитнӗ вӗт-ха. [15] Чикӗ урлă каçса ыттисен
ӗçӗпе мухтанас шухăш вара пирӗн çук. Анчах та ӗненӗвӗр çирӗп-
ленсе пынăçемӗн сирӗн хушшăрти ӗçӗмӗр сулмаклăрах пуласса
шанатпăр. [16] Вара эпир Ырă Хыпара ытти çӗр-шывсенче те ӳкӗт-
лесе вӗрентӗпӗр, паллах, унта ыттисем тунă ӗçпе, янттипе, эпир
мухтанмăпăр. [17] Мухтанас текен Хуçа Турăпа мухтантăр. [18] Хăйне
хăй ырлакан çын мухтавлă мар, Хуçа Турă ырлакан çын мухтавлă.

## 11-мӗш сыпăк

*Павел тата суя апостолсем*

[1] Мухтанса ăссăрла тыткаланишӗн эсир мана кăштах каçарас
пулсанччӗ! Тепӗр тесен, эсир мана каçарнине пӗлетӗп. [2] Эпӗ си-
ре Турă кӗвӗçӗвӗпе кӗвӗçсе чунăма çунтаратăп, мӗншӗн тесен
эпӗ сире пӗртен-пӗр ар валли — Христос валли — çураçрăм, сире
Ун умне таса хӗр халлӗн тăратасчӗ тетӗп. [3] Анчах та çӗлен чее-
ленсе Евăна улталанă пек, эсир те, Христоса тӳрӗ кăмăлпа ӗне-
нессине пăрахса, ăсăра пăсасран хăратăп. [4] Мӗншӗн тесен кам
та пулин сирӗн патăра пырса эпир вӗрентнӗ Иисусран урăхли
çинчен вӗрентсен — эсир çав çынна пачах та хирӗçлеместӗр.
Эпир илтернӗ Сывлăша мар, урăхлине сӗнсен — эсир илетӗр.

Эпир вĕрентнĕ Ырă Хыпара мар, урăхлине пĕлтерсен, эсир йы-
шăнатăр. [5] Аслă текен апостолсенчен эпĕ хама кăшт та кĕçĕне
хумастăп. [6] Сăмах ăсти мар пулин те, хама пĕлӳсĕр тееймĕп. Те-
пĕр тесен, çакна эпир сире тĕрлĕ лару-тăрура тĕрлĕ майпа кă-
тартса патăмăр.

[7] Эпĕ сире Туррăн Ырă Хыпарне тӳлевсĕр-мĕнсĕр ӳкĕтлесе вĕ-
рентрĕм. Сире асла кăларас тесе хама мĕскĕнлетсе çылăха кĕ-
тĕм-ши вара? [8] Сирĕншĕн тăрăшасчĕ тесе эпĕ ытти ĕненекен
ушкăнсем паракан пулăшупа пурăнтăм, вĕсене тăккаланмалла
турăм. Сирĕн патăрта чухне çити-çитми пурăнтăм пулин те, эпĕ
никама та йывăрлăх кӳмерĕм. [9] Мĕншĕн тесен Македонирен
килнĕ ĕненекен тăванăмсем манăн çитменнине çитерсех тăчĕç.
Сире йывăрлатас марччĕ тесе эпĕ пур тĕлĕшĕнчен те тăрăшрăм,
тăрăшăп та. [10] Ăшăмри Христос чăнлăхĕпе калатăп: пĕтĕм Ахаия
тăрăхĕнче çав мухтавăма манран никам та туртса илеймĕ. [11] Мĕн-
шĕн çапла тăватăп-ха? Тен, сире юратманран? Ку апла маррине
Турă пĕлет, çапах та халиччен мĕнле туса пурăнтăм, малашне те
çаплах тăвăп. [12] Хăйсем мухтанакан ĕçĕнче пирĕн пек пулмашкăн
сăлтав шыракансене унашкал сăлтав туса парас марччĕ. [13] Çав-
нашкал çынсем — суя апостолсем, чеен ĕçлесе вĕсем хăйсене
Христос апостолĕсем пек кăтартма тăрăшаççĕ. [14] Кунтан тĕлĕнме
кирлех те мар, мĕншĕн тесен шуйттан хăй те çутă ангелĕ пек ку-
рăнма тăрăшать. [15] Çавăнпа та шуйттан тарçисем хăйсене чăнлăх
тарçисем пек кăтартма тăрăшнинчен ним тĕлĕнмелли те çук. Вĕ-
сем ĕçне кура вĕçне тупĕç.

*Апостол пулнăшăн Павел асап курни*

[16] Çакна татах калам: кам та пулин мана ăссăр тесе ан шутла-
тăрччĕ. Ун пек шухăшлакан пур пулсан, мухтанкалатăр ара тесе,
мана ăссăр вырăнне те пулин йышăнсамăр. [17] Каласса калатăп-ха,
анчах ку сăмахсем Хуçа Турăран мар. Çавнашкал мухтанма хăйса
эпĕ ĕнтĕ ăссăрла хăтланатăп. [18] Нумайăшĕ ку тĕнчере хăйсен мĕн
пуррипе мухтанаççĕ пулсан, эпĕ те мухтанам. [19] Мĕншĕн тесен
эсир, ăслă-тăнлă çынсем, леш ăссăрсене чиперех тӳсетĕр. [20] Хă-
вăра кам та пулин пусмăрланине те, алăри çăкăра туртса илнине
те, çаратнине те, хăвăрпа мăнкăмăллă тыткаланине те, çупкă
çитернине те эсир чăтатăр. [21] Намăс пулин те, йышăнмах тивет:
ун пек хăтланма эпир пултараймарăмăр. Ăссăрла калам: çынсем

мӗнпе те пулин мухтанма хӑяҫҫӗ пулсан, эпӗ те хӑям. 22 Вӗсем ев-
рей-и? Эпӗ те. Вӗсем Израиль ҫыннисем-и? Эпӗ те. Авраам тӑхӑ-
мӗсем-и? Эпӗ те. 23 Вӗсем Христос тарҫисем-и? Ӑссӑрла калатӑп:
эпӗ тарҫӑран та тарҫӑрах. Эпӗ вӗсенчен чылай нумайрах ӗҫлерӗм,
пайтах патак ҫирӗм, тӗрмесенче нумайрах лартӑм, тӑтӑшах вилӗм-
пе куҫа-куҫӑн пултӑм. 24 Иудейсем мана пилӗк хутчен чӗн пушӑпа
вӑтӑр тӑхӑр хут ҫаптарчӗҫ. 25 Виҫӗ хутчен мана патакпа хӗнерӗҫ.
Пӗррехинче кӑшт кӑна чулпа пере-пере вӗлеретчӗҫ. Виҫӗ хутчен
караппа путма тӑтӑм, талӑка яхӑн мана тинӗс хумӗсем лӑскарӗҫ.
26 Эпӗ нумай ҫул ҫӳрерӗм, нумай хура-шур куртӑм: юхан шывсем
ҫинче те, вӑрӑ-хурахсенчен те, хамӑр халӑх ҫыннисенчен те, ыт-
ти халӑх ҫыннисенчен те, хулара та, пуш хирте те, тинӗсре те,
суя тӑвансенчен те. 27 Кун-ҫулӑм халтан кайиччен ӗҫлесе, ҫывӑр-
нӑ-ҫывӑрман, ҫинӗ-ҫимен, ӗҫнӗ-ӗҫмен иртрӗ; выҫӑпа, сивӗпе,
тумтирсӗр пӗрре мар аптӑрарӑм. 28 Тем те пӗр курнисӗр-тӳснисӗр
пуҫне, ман патӑмра тата куллен халӑх, манӑн мӗн пур ӗненекен
ушкӑншӑн та тӑрӑшмалла. 29 Халтан каяканпа пӗрле эпӗ халсӑр
юлатӑп, ҫылӑха кӗрес ҫынсемшӗн эпӗ те чуна ҫунтаратӑп.

30 Мухтанас тесен манӑн хамӑн халсӑрлӑхӑмпа мухтанмалла.
31 Эпӗ суйманнине Иисус Христос Хуҫамӑрӑн ӗмӗр-ӗмӗр мухтав-
лӑ Ашшӗ тата Турри пӗлет. 32 Эпӗ Дамаск хулинче чухне Арета
патшан унти пуҫлӑхӗ мана тытас тесе хула хапхи умне хурал тӑ-
ратрӗ. Мана лӑпӑ ҫине лартса хӳме ҫинчи чӳречерен вӗренпе ан-
тарса тартрӗҫ, ҫапла эпӗ унӑн аллинчен хӑтӑлса юлтӑм.

## 12-мӗш сыпӑк

*Турӑ кӑтартнӑ курӑнусемпе уҫӑлусем*

1 Усӑллӑ мар пулин те, татах мухтанам-ха. Ӗнтӗ хама Хуҫа Турӑ
кӑтартнӑ курӑнусемпе уҫӑлусем ҫинчен каласа парам. 2 Эпӗ Хрис-
тоса ӗненекен пӗр ҫынна пӗлетӗп. Вун тӑватӑ ҫул каялла ҫавна
(те ӳт-пӗвне, те чунне – пӗлейместӗп, Турӑ кӑна пӗлет) пӗлӗтӗн
виҫҫӗмӗш хутне ҫӗклесе кайнӑ. 3 Тата ҫав ҫын ҫинчен ҫакна пӗ-
летӗп. Те ӳт-пӗвӗпе, те чунӗпе – пӗлейместӗп, Турӑ кӑна пӗлет,
4 ӑна рая ҫӗклесе кайнӑ. Вӑл унта этем каласа кӑтартайми, ка-
лама та юраман сӑмахсем илтнӗ. 5 Ҫавӑн пек ҫынпа мухтанма
та пултаратӑп, хампа мухтанаймӑп, манӑн мухтанмалли те хал-
сӑрлӑхӑм кӑна. 6 Тепӗр тесен, мухтансан та ӑссӑр пек курӑнмӑп,

мӗншӗн тесен чăннине калăп. Анчах та эпӗ шарламăп — ахаль-
лӗн кам та пулин ман пирки хăй курнинчен те, эп каланинчен
те ытларах шухăшлӗ. [7] Хама Турă нумай уçса панипе мăнкăмăл-
ланса каясран вара чир-чӗр сăнни ўт-пӗвӗме витерчӗ. Мăнкă-
мăлланса каясранах мана тертлентерме шуйттан ангелне ячӗç.
[8] Ăна манран сиртӗр тесе эпӗ Хуçа Турра виççӗ хутчен тархасла-
рăм. [9] Анчах та Хуçамăр мана çапла каларӗ: «Эпӗ сана ырăлăх па-
тăм, унпа сана çитет, мӗншӗн тесен Манăн хăватăм халсăрлăхра
туллин палăрать». Çавăнпа та, ăшăмри Христос хăвачӗ яланах
пултăр тесе, эпӗ халсăрлăхăмпа малтанхинчен те ытларах мухта-
натăп. [10] Ĕнтӗ эпӗ халсăр чухне, хама кўрентернӗ чухне, нушаллă
чухне, хама хӗсӗрленӗ чухне, Христосшăн асап курнă чухне хӗ-
пӗртетӗп. Мӗншӗн тесен халсăр чухне эпӗ хăватлă.

*Павел Коринфри ӗненекен ушкăншăн пăшăрханни*

[11] Ĕнтӗ эпӗ мухтанса ăссăрах тухатăп. Эсир хăвăр мана çавăн
патне çитертӗр. Мана сирӗн ырламаллаччӗ, мӗншӗн тесен, ним
тӗшне те тăмастăп пулин те, аслă текен апостолсенчен эпӗ нимӗн-
пе те кая мар. [12] Хам апостол пулнине эпӗ сирӗн умăрта вăйлă
чăтăмлăхпа, тӗрлӗрен тӗлӗнмелле ӗçсемпе, паллăсемпе тата хă-
ватсемпе çирӗплетсе патăм. [13] Ытти ӗненекен ушкăнсемпе тан-
лаштарсан, çитменни сирӗн мӗн пулчӗ? Эпӗ сире йывăрлăх кў-
мерӗм, çавă кăна. Эппин, çав айăпшăн каçарсамăр мана. [14] Ĕнтӗ
эпӗ сирӗн патăра виççӗмӗш хут пымашкăн хатӗр. Эпӗ сире йы-
вăрлăх кўмӗп, мана сирӗнтен янтти кирлӗ мар, эсир хăвăр кирлӗ.
Ачисен ашшӗ-амăшӗ валли тупра пухмалла мар, ашшӗ-амăшӗн
ачисем валли пухмалла. [15] Эпӗ сире питӗ юрататăп пулин те,
эсир мана юратсах каймастăр. Апла пулин те, сирӗншӗн савăн-
сах тăкакланăп, сирӗн чунăршăн хама пуçӗпех парăп. [16] Эпӗ сире
тăкаклантарман пулсан та, тен, чеескер, сиртен улталаса илнӗ
тесе шутлатăр? [17] Сирӗн патăра янă çынсем урлă эпӗ хамшăн тă-
рăшса сирӗнтен мӗн те пулин илтӗм-и? [18] Эпӗ Тита сирӗн патăра
кайма ўкӗте кӗртрӗм, унпа пӗрле тăвансенчен пӗрне ятăм. Тит
сирӗнтен мӗн те пулин илчӗ-и? Эпир унпа пӗр шухăш-кăмăллă
мар-им вара? Пӗр çул-йӗрпех çўреместпӗр-им вара?

[19] Эпир сирӗн умăрта тўрре тухма тăрăшатпăр тесе шутламас-
тăр-и тата? Эпир, Христоспа пӗрлӗхлӗ пулса, мӗн каланине Турă
умӗнче калатпăр. Эй, савнă çыннăмсем! Çакна эпир йăлтах сирӗн

ӗненӗвӗре ҫирӗплетес тесе тӑватпӑр. [20] Эпӗ акӑ мӗншӗн шикленетӗп: сирӗн патӑра пырӑп та, эсир эпӗ ӗмӗтленнӗ пек пулмӑр, эпӗ
те эсир ӗмӗтленнӗ пек пулмӑп. Сирӗн хушшӑрта харкашу, кӗвӗ-
ҫӳ, тарӑху, хирӗҫӳ, элек, сӑмах сарни, мӑнкӑмӑллӑх, йӗркесӗрлӗх
пуррине манӑн курас марччӗ. [21] Сирӗн патӑра пырсассӑн Туррӑм
мана каллех мӗскӗнрен те мӗскӗне хӑварасран шикленетӗп. Ир-
сӗр ӗҫ туса, аскӑн та пӑсӑк пурӑнса ҫылӑха кӗнӗ хыҫҫӑн ӳкӗнмен
нумай ҫыншӑн манӑн хӳхлесе йӗмелле ан пултӑрччӗ.

### 13-мӗш сыпӑк

*Ҫыру вӗҫӗнчи асӑрхаттарусемпе саламсем*

[1] Сирӗн патӑра виҫҫӗмӗш хут пыратӑп ӗнтӗ. «Икӗ е виҫӗ ҫын
кӑтартса парсан, кирек епле айӑплав сӑмахӗ те чӑн шутланать», —
тенӗ Ҫырнинче. [2] Эпӗ сире иккӗмӗш хут пынӑ чухнех, малтанах
асӑрхаттарнӑччӗ; халӗ каллех, хам сирӗнпе мар чухне, маларах ҫы-
лӑхлӑ пурӑннисене те, ыттисене те тепре асӑрхаттарса ҫыратӑп.
Пырсассӑн никама та каҫару пулмӗ. [3] Христос хӑвӑрпа ман урлӑ
калаҫнине ӗнентерме ыйтатӑр эсир. Сирӗншӗн Вӑл вӑй-хӑватне
шеллемест, Унӑн вӑй-хӑвачӗ сирӗнте палӑрать. [4] Ӑна халсӑр чух-
не пӑталанӑ пулин те, халӗ Вӑл Турӑ хӑвачӗпе чӗрӗ. Эпир те ҫав-
нашкалах, Унпа пӗрлех халсӑр; анчах та, Турӑ хӑвачӗпе, сирӗн
хушшӑрта Унӑн чӗрӗлӗхӗпе палӑрӑпӑр.

[5] Хӑвӑртан хӑвӑр ыйтӑр: ҫирӗп ӗненетӗр-и? Хӑвӑра хӑвӑр тӗрӗс-
лесе пӑхӑр. Е хӑвӑр ӑшӑрти Иисус Христоса та пӗлейместӗр? Пӗ-
лейместӗр пулсан, тӗрӗслев витӗр тухаймарӑр пулать вара. [6] Ха-
мӑр пирки калас пулсан, эпир тӗрӗслев витӗр тухнине хӑвӑрах
ӑнланса илессе шанатӑп. [7] Сирӗн нимӗнле усал ӗҫ те тумалла ан
пултӑрччӗ тесе Турра кӗлтӑватпӑр. Ҫакна эпир хамӑра тӗрӗслев
витӗр тухнӑ пек кӑтартасшӑн тумастпӑр. Эпир тӗрӗслев витӗр
тухайман пек туйӑнсан та, сирӗн ырринех тумалла пултӑрччӗ
тетпӗр. [8] Мӗншӗн тесен эпир чӑнлӑха хирӗҫ кайма пултараймаст-
пӑр, чӑнлӑх майлӑ пулма ҫеҫ пултаратпӑр. [9] Эпир хамӑр халсӑр
чухне эсир вӑйлӑ пулнишӗн савӑнатпӑр. Сирӗн чун-чӗмпе ата-
ланса ҫитмелле пултӑрччӗ тесе кӗлтӑватпӑр та ӗнтӗ. [10] Сирӗн па-
тӑра пырсан Хуҫамӑр панӑ ирӗкӗмпе сире ятламалла ан пултӑрч-
чӗ манӑн. Ҫав ирӗкӗме аркатмашкӑн мар, пултармашкӑн панӑ,
ҫавӑнпа хам пыриччен ҫырса яратӑп та ӗнтӗ.

11 Эй, тăвансем! Çыру вĕçĕнче çакна калам: савăнăр, чун-чĕм-
пе пахаланăр, пĕр-пĕрне хастарлатăр, пĕр шухăшлă пулса, ки-
лĕштерсе пурăнăр. Вара юратулăхпа канăçлăх Турри сирĕнпе пу-
лĕ. 12 Пĕр-пĕрне сăваплăн, тăванла чуптуса саламлăр. Сире мĕн
пур ĕненекенсем салам яраççĕ. 13 Сирĕнте пурсăрта та Иисус
Христос Хуçамăрăн ырăлăхĕ, Атте Турă юратулăхĕ тата Святой
Сывлăш паракан тăванлăх пултăр. Аминь.